25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
ИЮНЬ
11
КĔÇНЕРНИКУН
134(6069) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ĂМĂРТУРИ ПАЯНХИ ПЫСĂК ЗАДАЧА

Республикăри нумай колхозсем кăçал çуракине кăтартуллăн, пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕç. Ăнăçлăн акса хăварнă тырăсем пур çĕрте те вăйлăн та тикĕс ӳсеççĕ. Колхозсем халĕ хăйсен пĕтĕм вăйне тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатас, тырăсен речĕсене кăпкалатса кирлĕ удобренисемпе апатлантарас ĕçе тума мобилизацилеççĕ. Çум çумлас ĕçе ваттисем те, çамрăк ачасем те активлăн хутшăнаççĕ.

Тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатас ĕçе уйрăмах халĕ, тырăсем вăй илсе ӳссе пынă вăхăтра туни питех те кирлĕ. Колхозсемпе совхозсене ку ĕçе ăнăçлăн туса ирттерме хулари халăх тата шкулсенче вĕренекенсем пулăшаççĕ. Халĕ республикăри колхозсемпе совхозсен хирĕсенче хулари ĕççыннисемпе вĕренекенсем пурĕ 12 пин çын ĕçлеççĕ.

Çитес çулхи тырпулшăн та халĕ, паян кун тăрăшни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кĕрхи тырăсене çуркунне сухаласа хăварнă çĕр çине акса хăварни кĕрхи тырăсен тухăçлăхне ӳстерет. Çавăнпа та халĕ колхозсен çĕртме сухине пысăк пахалăхпа тата хăвăртрах туса хăварма тăрăшмалла.

Ирхи çĕртме туни — кĕртырррисен тухăçлăхне вăйлăн ӳстерекен пĕртен пĕр тĕрĕс тата питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать. Вăл уйхирсене çумкурăкĕсем пусса илессинчен хăтарать, çĕрĕн нӳрлĕхне, сĕткенлĕхне упраса хăварать, тăпрара тырăсене ӳсме кирлĕ апатсене пухма пулăшать. Çавăнпа ĕнтĕ кашни колхозăн, кашни машинно-тракторнăй станцин кăçал кĕртыррисем акăнмалли çĕр лаптăкĕсене çĕртме туса хăварассишĕн тимлĕн ĕçлемелле.

Пирĕн республикăри колхозсем, Мари АССР-пе социализмлă ăмăртăва тухса, ирхи çĕртме сухине июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне туса çитерме обязательство илнĕччĕ. Колхозсен, МТС-сен çĕртме сухине тăвас ĕçе çак кунсенчех ăнăçлăн вĕçлеме пур майсем те пур. Кăна тума ĕçе тĕрĕс организацилесе, ĕç вăйĕпе туллин усă курма пĕлни кирлĕ. Халĕ тракторсен вăйне йăлтах çĕртме сухи тăвас ĕçе куçармалла. Кашни трактор талăкра 20 сехет хушши ĕçре пулмалла, трактористсем икĕ сменăпа ĕçлессине организацилемелле.

Кăна тума халĕ ĕнтĕ çăмăлтарах. Мăншĕн тесен кунсем вăрăмланчĕç, çамрăк трактористсем ĕçе хăнăхса, вĕренсе çитрĕç. Вĕсем ĕнтĕ ĕçре çĕнĕ çынсем мар, ĕçре опыт илнĕ, маттур трактористсем пулса тăчĕç. Тракторсене вăхăтра лайăх пăхса тăнипе, таса тытнипе, трактористсене ĕçре пулăшса тăнипе, ĕçĕн условийĕсене малалла лайăхлатса пынипе республикăри машинно-тракторнăй станцисем ирхи çĕртме сухинче те пысăк çитĕнӳсем тума тивĕçлĕ.

Республикăри машинно-тракторнăй станцисем чылайĕшĕ ирхи çĕртме сухине тума большевикла хастарлăхпа тытăнчĕç. Вăрнар МТС июнĕн 1-мĕш тĕлне 2.865 гектар сухаласа плана 60 процент пурнăçланă. Çавăн пекех Ишлей, Шăхасан, Красноармейски, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай машинно-тракторнăй станцийĕсем те çĕртме сухине тăвас ĕçре начар мар ĕçлеççĕ. Анчах та çак ĕçĕн хăвăртлăхне нумайĕш МТС-сем ӳстерме тивĕç. Куславкка, Пăрачкав, Тăвай, Етĕрне районĕсенчи МТС-сем çĕртме сухин планне пурĕ те 7—9 процент кăна пурнăçланă-ха. Уйрăмах Пăрачкав МТС-ĕ юлса пырать.

Çĕртме сухи — ялхуçалăхĕнчи ĕçсем хушшинче пысăк вырăнта тăрать. Партипе советсен тата комсомолăн районри организацийĕсен, çĕрĕç оргăнĕсемпе МТС-сенчи работникĕсен çак ĕçе тума çĕре пысăк тимлĕх хумалла. Иртнĕ çул пирĕн республика çĕртме сухине планран чылай ирттерсе туса хăварнă. Кĕрхи тырăсем акас ĕçе кăçал эпир нумай хут лайăхрах туса ирттерме тивĕçлĕ.

Новосибирск облаçĕнчи «Путь крестьянина» ялхуçалăх артелĕ кăçал тырпулсен тухăçне государство шăтартса панă планран чылай ӳстерме чĕнсе каланине республикăри колхозсенче пысăк çĕкленӳпе йышăнчĕç. Пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн колхозсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнаççĕ. Паян пирĕн хаçатра колхозсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсем пичетленсе тухаççĕ. Партипе советăн тата комсомолăн районри активĕ ăмăртăвăн условийĕсене кашни колхозник, колхозница патне çитерме тивĕçлĕ. Колхозниксен пĕтĕм массине 1942 çулта нихăçанхи пек мар пысăк çитĕнӳсем тума çĕклемелле.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулас тесен, пирĕн колхозсен, ытти ĕçсене кăтартуллăн тунипе пĕрлех, çĕртме сухине те планран ирттерсе пысăк пахалăхпа туса хăвармалла. Ку ĕнтĕ колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен паян тумалли пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Ăна пирĕн вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ хăвăртлăхпа пурнăçламалла.

Колхозсен, районсен, облаçсен, крайсен тата республикăсен пысăк тухăçлă тырпулшăн тата колхозла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн

УСЛОВИЙĔСЕМ

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, Новосибирск облаçĕнчи Чистоозернăй районри «Путь крестьянина» ятлă ялхуçалăх артелĕн тата Казах ССР-ĕнчи Алма-Ата облаçĕнчи Кугалински районри Сталин ячĕпе тăракан артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем çĕршыври мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме, колхозсемпе районсен, облаçсен тата крайсемпе республикăсен пысăк тухăçлă тырпулшăн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултарассишĕн пыракан ăмăртăвне организацилеме, çапла вара нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 1942 çулта татăклăнах çĕмĕрсе тăкмашкăн хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшма чĕнсе каларĕç.

«Путь крестьянина» тата Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсенчи колхозниксен пуçарăвне ырласа, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе СССР Наркомземĕн Политикăллă Управленийĕ социализмлă ăмăртăвăн çакăн пек условийĕсене пĕлтереççĕ:

I. Пысăк тухăçлă тырпулшăн

Колхозсем енĕпе.

Çурхи тата кĕрхи тырăсене акас тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултаракан, калчасене лайăх пăхса усракан, тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртекен, тĕштырăсемпе техникăллă культурăсене тата пахча-çимĕçсемпе çĕрулмие кашни гектартанах планпа палăртнинчен ытларах пухса илекен, хура çĕртме тата кĕрхи çĕртме тăвас плансене тултаракан, государствăна тĕштырă памалли обязательствăна срокчен тултаракан, государствăна ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли тата МТС ĕçленĕшĕн натурăпа тӳлемелли обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртекен, çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес тата выльăх-чĕрлĕх хисепне йышлатас плана ирттерсе тултаракан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана ытти показательсем енĕпе те тултаракан, çавăн пекех тата выльăх апачĕ хатĕрлемелли плана тултаракан, мĕнпур выльăхсене валли вите сем туса хатĕрлекен колхозсем социализмлă ăмăртура мала тухнă тесе шутланаççĕ.

Районсем енĕпе.

Çурхи тата кĕрхи тырăсене акас тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултаракан, калчасене лайăх пăхса усракан, тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртекен, тĕштырăсемпе техникăллă культурăсене тата пахча-çимĕçсемпе çĕрулмие кашни гектартанах планпа палăртнинчен ирттерсе пухса илекен, хура çĕртмепе кĕрхи çĕртме планне тултаракан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство планне пур показательсем енĕпе те пурнăçа кĕртекен, çавăн пекех тата кашни выльăх валли апат хатĕрлемелли плана тултаракан, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли тата МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата тӳлемелли обязательствăсене районри колхозсем вăхăтра пурнăçа кĕртмелле тăвакан районсем ăмăртура мала тухнă тесе шутланаççĕ.

Облаçсем, крайсем тата республикăсем енĕпе.

Çурхи тата кĕрхи культурăсем акас тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултаракан, калчасене лайăх пăхса усракан, тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртекен, пур культурăсем енĕпе те кашни гектартанах планпа палăртнинчен кая мар тырпул пухса илекен, хура çĕртмепе кĕрхи çĕртме сухине ăнăçлăн туса ирттерекен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата кашни выльăх валли апат хатĕрлес тĕлĕшпе государство панă плана тултаракан, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тӳлемелли обязательствăсене колхозсем вăхăтра парса татассине пурнăçа кĕртекен облаçсем крайсемпе республикăсем ăмăртура мала тухнă тесе шутланаççĕ.

II. Колхозла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн

Колхозсем енĕпе.

Çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес тата контрактацилес тĕлĕшпе, çавăн пекех тата пур тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхсен йышне те ӳстерес тĕлĕшпе, сĕт суса илес, çăм касса илес, кашни сыснаран çăварсем илес тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултаракан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана ытти показательсем енĕпе те ирттерсе тултаракан, кашни выльăх валли апат хатĕрлемелли плана ытлашшипех пурнăçа кĕртекен, выльăх-чĕрлĕхсен пĕтĕм хисепĕ валли витесем туса хатĕрлекен тата вĕсене 1942—1943 çулти хĕл валли вăхăтра хатĕрлесе çитерекен, тырпулсем акса хăвармалли тата ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстермелли плана тултаракан, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли тата МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата тӳлемелли обязательствăсене вăхăтра тултаракан колхозсем ăмăртура мала тухнă тесе шутланаççĕ.

Районсем, облаçсем, крайсемпе республикăсем енĕпе.

Çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес тата контрактацилес тĕлĕшпе, çавăн пекех тата майракаллă шултра выльăхсен, сыснасен, сурăхсемпе лашасен хисепне ӳстерес тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултаракан, сĕт суса илес тата çăм касса илес плана ытлашшипех пурнăçа кĕртекен, 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана ытти показательсем енĕпе те тултаракан, кашни выльăх валли апат хатĕрлемелли плана тултаракан, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли тата МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата тӳлемелли обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртекен районсем, облаçсем, крайсемпе республикăсем ăмăртура мала тухнă тесе шутланаççĕ.

* * *

Социализмлă ăмăртура мала тухнă колхоза облаçри çĕрĕç отделĕн, крайри çĕрĕç отделĕн тата республика Наркомземĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне параççĕ.

Социализмлă ăмăртура мала тухнă района ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне параççĕ.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăртура мала тухнă облăçа, края, республикăна (облисполкома, крайисполкома, республика Совнаркомне) Оборонăн Государственный Комитечĕ йышăннă тăрăх Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне параççĕ тата ĕçре палăрнă колхозниксене, колхозницăсене, звеньевойсене, бригадирсене, специалистсене, колхоз руководителĕсене, ялсоветсен, районсен, облаçăн, крайăн, республикăн руководителĕсене премилеме укçа параççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртура мала тухнă облăçа, края, республикăна (облисполкома, крайисполкома, республика Совнаркомне) Оборонăн Государственный Комитечĕ йышăннă тăрăх Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне параççĕ тата ĕçре палăрнă колхозниксене, колхозницăсене, выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсене, специалистсене, колхозсен, ялсоветсен, районсен, облаçăн, крайăн, республикăн руководителĕсене премилеме укçа параççĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне облисполком, крайисполком, республика Совнаркомĕ социализмлă ăмăртура мала тухнă чи лайăх колхоза парать.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне илекен колхоза укçан премиче параççĕ.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăртура мала тухнă колхозсене ĕçре палăрнă колхозниксемпе колхозницăсене тата колхозăн ертсе пыракан работникĕсене премилеме, çавăн пекех тата культурăпа йăла тĕлĕшпе тĕрлĕ мероприятисем туса ирттерме укçан çакăн пек премисем параççĕ:

Пĕрремĕш премисем — 5,
Иккĕмĕш премисем — 15,
Виççĕмĕш премисем — 30.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултарассишĕн пыракан ăмăртура мала тухнă колхозсене пама та çакăн чухлех тата çавăн пысăкĕш премисемех пулаççĕ.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăртура мала тухнă районсене ĕçре палăрнă работниксене премилеме, çавăн пекех тата культурăпа йăла тĕлĕшпе мероприятисем туса ирттерме укçан çакăн пек премисем параççĕ:

Пĕрремĕш премисем — 2,
Иккĕмĕш премисем — 4,
Виççĕмĕш премисем — 6.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртура мала тухнă районсем валли те çавăн чухлех тата çавăн пысăкĕш премисемех пулаççĕ.

Социализмлă ăмăртура малта пыракансене «Социализмлă ялхуçалăхĕн отличникĕ» значок парса наградăлаççĕ. Значок парса наградăлассине облаçри, крайри çĕрĕç отделĕ, автономиллĕ е союзлă республика Наркомземĕ тăратнипе, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн приказĕ тăрăх туса ирттереççĕ. Чи лайăх ĕçлекен уйхир бригадисемпе звеносене тата выльăх-чĕрлĕх фермисене «ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Хисеп грамотине» парса наградăлаççĕ.

* * *

Колхозсем, районсем, облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене çулталăкра икĕ хут тăваççĕ: малтанхи хут — çураки ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн тата иккĕмĕш хут — тырпулсене пухса кĕнĕ, кĕрхи тырăсене акнă тата кĕрхи çĕртме туса ирттернĕ хыççăн тăваççĕ. Татăклă итогсене ялхуçалăх çулĕн вĕçĕнче, анчах 1943 çулти январĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса ирттереççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене кашни кварталра, виççĕ уйăхра пĕр хут туса ирттереççĕ.

Ăмăрту результачĕсене центрти тата вырăнсенчи хаçатсенче пичетлеççĕ.

* * *

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе СССР Наркомземĕн Политикăллă Управленийĕ колхозсен, çĕрĕç оргăнĕсен, машинно-тракторнăй станцисен руководителĕсене, МТС политотделĕсене пысăк тухăçлă тырпулшăн тата колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва ертсе пыма, çапла майпа нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах çĕнтермешкĕн кирлĕ ялхуçалăх продукчĕсене çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах парса тăма чĕнеççĕ.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн хĕрарăмсен трактор бригадисемпе хĕрарăм-трактористкăсен ăмăртăвне ертсе пырас тĕлĕшпе тунă комиссийĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

92. **Анастасия Иванова** — Чкаловски МТС-ри трактористка. СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, вăл çурхи ĕçсен планне 124 процент тултарнă, 60 килограмм горючи перекетленĕ.

93. **Ксения Яковлева** — Тăвай МТС-ĕнчи трактористка. СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, вăл çуракинче планра кăтартса панă 45 гектар вырăнне 73 гектар сухаланă, çурхи ĕçсен планне 162,2 процент тултарнă. Преми шучĕпе ăна 63 ĕçкунĕ хушса панă.

94. **Иустиния Иванова** — Тăвай МТС-ĕнчи трактористка. СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, вăл çуракинче планра кăтартса панă 45 гектар вырăнне 60,7 гектар сухаланă, çурхи ĕçсен планне 135 процент тултарнă. Ăна преми шучĕпе 60 ĕçкунĕ хушса панă.

95. **Наталия Краснова** — Тăвай МТС-ĕнчи трактористка. СХТЗ маркăллă тракторпа пĕрремĕш çул ĕçлет пулин те, вăл çуракинче планра кăтартса панă 45 гектар вырăнне 66,7 гектар сухаланă, çурхи ĕçсен планне 148,2 процент тултарнă.

96. **Нина Кузьмина** — Тăвай МТС-ĕнчи трактористка. Тракторпа пĕрремĕш çул ĕçлет. Çуракинче СХТЗ маркăллă тракторпа вăл хăй сменинче планра кăтартса панă 45 гектар вырăнне 50,9 гектар сухаланă, юлашки 5 кун хушшинче 32 килограмм горючи перекетленĕ. Кузьмина юлташ бригадăра агитатор пулса ĕçлет, агитаци ĕçне кăтартуллăн организациленĕ.

97. **Евдокия Долгова**— Комсомольски МТС-ри трактористка. СХТЗ маркăллă тракторпа вăл 82,15 гектар сухаланă, çурхи ĕçсен планне 171,1 процент тултарнă.

98. **Анна Кузнецова** — Комсомольски МТС-ри трактористка. СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçлесе, вăл çуракинче 77 гектар сухаланă, çурхи ĕçсен планне 160 процент тултарнă, 20 килограмм горючи перекетленĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 9-мĕшĕнче фронтра вырăнти çапăçусем тата, разведчиксен активлă ĕçĕсем пулса пынă.

Фронтăн Севастополь участокĕнче пирĕн войскăсем противникăн нумай хутчен тунă атакисене сире-сире янă, противника пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Июнĕн 8-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 26 танкне, пĕр бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 20 лавне, 9 зенитнăй тата артиллери батарейине, миномётсен 6 батарейине, 3 тракторне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, пĕр буксира путарнă, противникăн пехотине 3 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Севастополь участокĕнче противник, çухатусене пăхмасăр, çаплах геройла хулана атакăлать. Пирĕн боецсем противникăн атакисене сире-сире янă, противника пысăк çухатусем кӳнĕ. Новиков юлташ командир пулса ертсе пыракан часа хирĕç нимĕçсем пехотăн 2 полкне çити атакăна кĕртсе янă. Артиллеристсемпе миномётчиксем тĕл персе гитлеровецсене сапаласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн нумай çĕршер вилли выртса юлнă. Противник Вишняков командирăн подразделенине хĕсĕ каштах каялла чакарнă. Анчах та пĕр сехет иртсенех пирĕн боецсем хăюллă контратака пуçласа янă та, ал вĕççĕн çапăçăва кĕрсе кайса, нимĕçсене каялла сирсе янă. Гусаров юлташ командир пулса ертсе пыракан часри краснофлотецсем хăйсене шеллемесĕр çапăçнă. Иртнĕ кун хушшинче Севастополь патĕнче, уйрăм участоксене кăна илсен те, нимĕçсен фашистла войскисен салтакĕсемпе офицерĕсем 2.500 çын ытла вилнĕ. Нимĕçсен 14 танкне пĕтерсе тăкнă тата 10 танкне сиенленĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 7 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 14 самолетне сиенленĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чассем противника хирĕç хаяррăн çапăçнă. Çапăçу хирĕнче противникăн çĕршер вилли выртса юлнă. 250 винтовка, 18 пулемет, 3 миномет, 400 граната, снарядсем, минăсем нумай тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра Плотников юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени ăнăçлăн кĕрешет. Çав подразделенин боецĕсем темиçе кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити вĕлернĕ, противникăн штабне аркатса тăкнă, кирлĕ документсем тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть противникăн артиллерийĕн 2 орудине, 5 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата çĕрпе йывăçран тунă 16 огневой точкине çĕмĕрнĕ. Гитлеровецсене 200 çынна çити вĕлернĕ е амантнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче противникăн тылĕнче пирĕн чассемпе партизансен отрячĕсем нимĕçсен фашистла войскисен пысăк вăйĕсене хирĕç çапла хаяррăн çапăçнă. Пирĕн пĕр часăн боецĕсем противникăн темиçе атакине сире-сире янă, тăшмана йывăр çухатусем кӳнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 200 вилли ытла выртса юлнă. Пирĕн артиллери нимĕçсен 2 танкне тата пĕр бронемашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пулеметчик-партизана А. юлташа нимĕçсен пĕр ушкăнĕ тапăннă та унăн хĕçпăшалне туртса илнĕ. Штаба илсе кайнă чухне çул çинче партизан хăйне сыхласа пыракан гитлеровецсенчен пĕрин автоматне ярса илнĕ те, икĕ конвоира вĕлерсе пăрахса, тарса çухалнă. Çав кунах каç пулсан А. юлташ пĕр ял патĕнче засадăна кĕрсе ларнă. Çулпа нимĕçсен отрячĕ иртсе пынă. Хăюллă партизан пулеметран темиçе черет персе 26 оккупанта вĕлерсе тăкнă.

* * *

7-мĕш авиадесантнăй дивизири парашютлă дивизионăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Густав Фрост çапла каласа панă: «Март уйăхĕнче пире эсир киле каятăр тесе пĕлтерчĕç. Анчах пире чике таранах лартрĕç. Чăнах та ĕнтĕ эпир вагонсем çине лартăмăр та кайрăмăр, анчах та Германие мар, Хĕвелтухăç фрончĕн тепĕр участокне. Парашютлă чассенчи салтаксем вĕсене ахаль пехотинецсем вырăнне усă курнă пирки тарăхаççĕ. Малтанах эпир кун пек ĕç вăхăтлăха кăна пулĕ тесе шутлаттăмăр, анчах та каярахпа çакă лайăх палăрчĕ: пире яланлăхах типсĕр çинчи çар аллине панă. Российăна эпир иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче çитрĕмĕр. Ун чухне пирĕн ротăра 220 штыкчĕ. Халĕ мĕн пурĕ те 58 çын кăна тăрса юлчĕ. Ыттисем вилсе пĕтнĕ, е аманнă. Эпир хамăра хамăр пире никам та çĕнтерес çук тесе шутлаттăмăр. Халĕ, Хĕвелтухăç фронтĕнче пулса курнă хыççăн, пирĕнтен нумайăшĕ Германи çарĕ çĕнтерессине ĕненмесçĕ ĕнтĕ».

* * *

Нимĕçсен унтер-офицерĕ Вернер Шлих хăйĕн пĕлĕшĕсем патне çапла çырать: «...Кунĕн-çĕрĕн усал блиндажра ларатпăр, пуçа кăларса пăхма та хăяймастпăр. Ĕнтĕ 11 уйăх хушши сире вырăссене хуçса тăкнă тесе калаççĕ. Эпĕ сире çакна шантарса калатăп: хăйсен мĕн чухлĕ вăй пуррине вĕсем пире кашни кунах туйăнтармаллах кăтартаççĕ. Хам пурăнăçшăн халĕ эпĕ виçĕ пус та парас çук. Эпир пурте пĕтетпĕр. Çакна пĕлсе тăма йывăр вăл, анчах та пурте çапла шутлаççĕ».

* * *

Германири радио темиçе хут та çуракине ăнăçлăн туса ирттерни çинчен пĕлтерчĕ. Анчах та нимĕç салтакĕсем çумĕнче тупнă çырусенче вĕсен тăванĕсем ĕç мĕнле тăнине тĕрĕссипе кăтартса пĕрççĕ. Карл Мор ефрейтор патне унăн амăшĕ-амăшĕсем çапла çыраççĕ: «...Пирĕн ĕçсем кунта начар. Кĕрхи ыраш калчисем пĕтĕмпе тенĕ пекех шăнпа пĕтрĕç, урпа калчисем те пĕтрĕç, пăсса акма нимĕн те çук». Гербет Хебекерль унтер-офицер патне Эркслебенран амăшĕ çапла çырать: «Ыраш калчисем нумай пĕтрĕç. Вильгельм Бенкебахăн тата ыттисен те нумайăшĕн ĕçе тепĕр хут пуçламалла пулать. Анчах та вăрлăх та, ĕç алли те çук». Маун салтак патне амăшĕ çапла çырать: «...Малалла мĕнле пурăнассинчен эпĕ чĕтресе хăраса тăратăп. Тырпулсем темĕн пек лайăх пулсан та, пĕлтĕрхинчен 2 хут сахалтарах пуçтарса илмелле пулать».

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Петрусенко цехĕ малта пырать

КУСЛАВККА, июнĕн 10-мĕш. (**Телефонпа**). Комбинатри социализмлă ăмăртура хальхи вăхăтра Петрусенко юлташ начальник пулса тăракан цех малта пырать. Цех май уйăхĕнчи производство планне 119 процент тултарчĕ, лайăх пахалăхлă продукци пачĕ. Çавăншăн комбинат руководстви цех коллективне хăйĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕ. Рабочисем пурте пекех хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ. Уйрăмах çамрăксемпе комсомолецсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Комсомолец-слесарь Вислобоков юлташ сменари нормăна 200 процент ытла, комсомолец-сварщик Сафиров юлташ 300 процент таран тултарать.

Н. ГРИГОРЬЕВА.

НОРМĂСЕНЕ ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРАÇÇĔ

СĔНТĔРВĂРРИ. «Портной» артельри цехсем пурте социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Ăмăртура хĕрарăм тумтирне çĕлекен цех малта пырать. Ку цех май уйăхĕнчи ĕç планне 127 процент тултарчĕ. Çĕвĕçсем хăйсен ĕç тухăçлăхĕсене кунран-кун ӳстереççĕ. Катя Эм, К. Дубова çĕвĕçсем кулленхи нормăсене пĕрмаях 150 процент тултараççĕ.

Артельре икĕ фронтовой бригада организациленĕ. Çак бригадăсен членĕсем Лебедева, Грободелова, Гордеева юлташсем хăйсен нормисене 200—220 процент, Сорокина, Иванова юлташсем 175—180 процент, Просвиркина тата Владимирова юлташсем 145—150 процент тултарса ĕçлеççĕ.

А. РАЗИН.

Пристань çинче ĕçлекенсен обязательстви

Шупашкар пристанĕн вырăнти киммисем апрельпе май уйăхĕсенче грузсем турттармалли плана тоннаж енĕпе те, тонна-километр енĕпе те ирттерсе тултарнă. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пристань коллективĕ хăйĕн ĕçне татах лайăхлатма пулчĕ. Кăçалхи навигацире грузсем турттармалли плана Октябрь уявĕ тĕлне 110 процент тултарма, грузчиксен ĕç тухăçлăхне 10 процент чухлĕ ӳстерме обязательство илчĕ.

Çак пунктсемпе Шупашкар пристанĕн коллективĕ Чикме пристанĕн коллективне ăмăртăва чĕнчĕ.

Н. ФРУЭНТОВА.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 10-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 10-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра пысӑк улшӑнусемех пулман.

* * *

Фронтӑн Севастополь участокӗнче пирӗн артиллеристсем хӑйсен батарейисенчен персе пӗр кун хушшинче противникӑн пехотине пӗр полка ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери пеннипе ӗнер, туллимар даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫсен 16 самолетне персе ӳкернӗ, 10 самолетне сиенленӗ.

* * *

Артиллери питӗ вӑйлӑн персе тӑнӑ хыҫҫӑн Ларин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫсем (Ленинград фрончӗ) хӑвӑрт пырса ҫапса противникӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрнӗ те халӑх пурӑнакан 3 пункта йышӑнса илнӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫсенчен 7 оруди, 8 миномет, 6 пулемет, радиостанци, нумай винтовка тата боеприпассем тытса илнӗ. 149 ҫынна тыткӑна илнӗ. Противникӑн 600 салтакӗпе офицерӗ ытла вилнӗ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче нимӗҫсен полкӗ, авиаципе танксем пулӑшнипе, наступлени тума хӑтланса пӑхнӑ, анчах та ӑна пысӑк сухату кӳрсе каялла сирсе пӑрахнӑ. Пирӗн боецсем нимӗҫсен 2 танкне, 2 орудине тата 400 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Лебедев юлташ командир пулса тӑракан чаҫӑн разведчикӗсем нимӗҫсен подразделенине хирӗҫ ҫапӑҫма тытӑннӑ. Пирӗн боецсем 25 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, автоматсем, винтовкӑсем тата ытти ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Гитлеровецсен отрячӗ пирӗн пулеметчик-красноармееца Сабиров юлташа, засадӑра ларнӑскере, тыткӑна илме хӑтланнӑ. Хастарлӑ пулеметчик ҫухалса кайман. Противника ҫывӑха янӑ та ручной пулеметран пеме тытӑннӑ. 30 нимӗҫе пӗтерсе тӑкса, Сабиров юлташ хӑйӗн чаҫне таврӑннӑ.

* * *

Брянск облаҫӗнчи партизансен Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ вӑрман ҫулӗ патӗнче засада тунӑ. Часах нимӗҫсен кавалери эскадронӗ курӑнса кайнӑ. Партизансем оккупантсем ҫине пӑшалсемпе пулеметсенчен пеме тытӑннӑ. Нимӗҫсем хирӗҫ тӑма хӑтланса пӑхнӑ, анчах та, 50 ҫын вилсе е амансa стройран тухсан, нимӗн йӗркесӗр каялла чакнӑ. Майора—эскадрон командирне вӗлернӗ. Партизансем миномет, 20 лаша, 5 лав, 4 пулемет тата ытти ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫсен 256-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 476-мӗш полкӑн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Гергард Байске ҫапла каласа панӑ: Фронтра тахҫантанпах тӑракан салтаксем тӑмсайланса кайнӑ, пур япала ҫине те пӗр интересленмесӗр пӑхаҫҫӗ. Пурне те пӗр ыйту ҫеҫ хумхантарать — хӑҫан пире улӑштарӗҫ-ши, теҫҫӗ. Ытти япала пӗрте интереслентермест. Вӑрҫӑ пуҫлансанах разведкӑна каяс текен салтаксем питӗ нумай тупӑнатчӗҫ. Халӗ хӑйсен ирӗкӗпе каяс текенсем ҫук. Разведкӑна персе пӑрахассинчен хӑраса ҫеҫ каяҫҫӗ. Нумайӑшӗ ҫапла калаҫҫӗ: «Пире наступление ярсан, эпир пурпӗрех чӑтса тӑрас ҫук, пире ҫапса хуҫӗҫ», теҫҫӗ.

* * *

Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Ленинград облаҫӗнчи М. Остров, Рай тата Мяксино ялӗсене тӗппипех ҫунтарса янӑ. Гитлерла бандитсем мӗнпур выльӑх-чӗрлӗхе хӑваласа кайнӑ, халӑхран мӗнпур апат-ҫимӗҫе тата япаласене туртса илнӗ. Ҫав ялсенче нимӗҫсем мирлӗ пурӑнакан 15 ҫынна персе вӗлернӗ. Персе вӗлернисем хушшинче ҫаксем пур: 90 ҫулти карчӑк Василиса Никифоровна, Елена Михайлова тата унӑн 10 ҫулти хӗрӗ, Афимья Кудрявцевӑпа унӑн икӗ ачи, Прасковья Николаевӑпа унӑн 13 ҫулти ывӑлӗ тата ыттисем те.

* * *

Арендаль хулинче (Норвегия) вырнаҫнӑ нимӗҫ салтакӗсем ҫынсен хваттерӗсене ыйтмасӑр-тумасӑр кӗрсе каяҫҫӗ те вӗсенчен хаклӑ япаласене туртса илеҫҫӗ. Гитлеровецсем намӑса пӗлмесӗр норвежец-хӗрарӑмсемпе хӗрсем ҫумне ҫыпҫӑнаҫҫӗ те вӗсене хӑйсемпе пурӑнтараҫҫӗ. Хулара демонстраци пулса иртнӗ, демонстрацире халӑх нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсем ҫаратса пусмӑрласа пурӑннине хирӗҫ протестленӗ.

РЕСПУБЛИКӐРИ УЙХИРСЕНЧЕ

Пысӑк тухӑҫлӑхпа

ШАХАСАН. Шуркассинчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз членӗ М. Гурьева юлташ 6 кун хушшинче 34 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Ҫураки тунӑ вӑхӑтра Е. Федорова, А. Трофимова, П. Федорова колхозницӑсем 6 кун хушшинче 30—33-шер ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ.

Матьшӳри «Молодой колхозник» колхоз членӗ П. Денисова производствӑра стахановла ӗҫлет. Халӗ, пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ хыҫҫӑн, вӑл тата тухӑҫлӑнрах ӗҫлеме пуҫларӗ. Кӑҫал П. Денисова юлташ 185 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. 72 ҫулти ватӑ колхозник Е. Тимофеев юлташ 49 ӗҫкунӗ ӗҫлесе тунӑ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Ваттисем те, ҫамрӑккисем те тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ

КАЛИНИНО. Тӑван ҫӗршыв нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫать. Ҫак ҫапӑҫура ҫӗнтермешкӗн халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин юлташ тылри ӗҫҫыннисене, нумайрах та лайӑхрах ӗҫлесе, Хӗрлӗ Ҫара вӑйлӑн пулӑшса тӑма хушать. Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказне кашни колхозник, кашни колхозница ӑшшӑн ырласа чӗрене хунӑ. Ӑна пурнӑҫлассишӗн кашни кун тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ.

— Эпӗ ватах мар-ха, вӑйсем пур, — тет 3 красноармеецӑн ашшӗ, 65 ҫулти колхозник Я. Михайлов юлташ. — Кӑҫал ӗҫлемесӗр ларма эпӗ пурпӗрех те пултараймастӑп, ывӑлӑмсем фронтра ирӗклӗхшӗн, чыслӑхшӑн ҫапӑҫаҫҫӗ, эпӗ те вӗсемпе пӗрлех. Кӑҫал сахалтан та 300 ӗҫкунӗ ӗҫлесе тӑватӑп.

Колхоз производствинче активлӑн ӗҫлесе, Я. Михайлов 61 ӗҫкунӗ тунӑ та ӗнтӗ.

Сӑкӑтри Буденный ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем пурте колхоз производствинче активлӑн ӗҫлеҫҫӗ. Партипе правительство колхозниксем обязательнӑй йӗркепе ӗҫлесе тумалли ӗҫкунӗсен минимумне ӳстересси ҫинчен йышӑннӑ постановление кунта кашни колхозникех тӗплӗн ӑнланнӑ. Ӗҫкунӗсен минимумӗ чухлӗ кӑна мар, вӗсем кӑҫал татах та ытларах ӗҫлеме тӑрӑшаҫҫӗ. М. Белов колхозник майӑн 15-мӗш тӗлне 57 ӗҫкунӗ тунӑ, А. Цветков колхозник 65 ӗҫкунӗ тунӑ. Вӗсем колхозри ватӑ ҫынсенчен пӗрисем.

Ҫавӑн пекех колхозра ҫамрӑк ачасем те тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. 16 ҫулти С. Александров кӑҫал 26 ӗҫкунӗ ытла ӗҫлесе тунӑ, М. Сергеев 25 ӗҫкунӗ, М. Григорьева 20 ӗҫкунӗ тунӑ.

К. МАТВЕЕВ.

Ҫамрӑк трактористкӑсене вӗрентсе пымаҫҫӗ

Сӗнтӗр машинно-тракторнӑй станцийӗ кӑҫалхи ҫураки тӗлне трактористсем хатӗрлекен курсран 78 ҫамрӑка вӗрентсе кӑларнӑ. Вӗсем хушшинче хӗрачасем те чылай. Ҫамрӑк трактористкӑсем, ҫавӑн пекех трактористсем те, ҫуракинче тракторпа хӑйсем тӗллӗн ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Хӑшпӗрисем ӗҫе хӑюсӑррӑн тытӑнни те пулнӑ. Ҫакӑнтан ӗнтӗ МТС дирекцийӗпе политотдел ҫуракинче ҫамрӑк трактористсем епле ӗҫленине тимлӗн сӑнаса пырса, вӑхӑтра пулӑшу парассине чи малти вырӑнта лартма кирли курӑнсах тӑнӑ.

Анчах кӑна кунта пачах шута илмен. Ҫамрӑк трактористсене, уйрӑмах трактористкӑсене, ӗҫре вӗрентсе пырассине, вӑхӑтра техникӑллӑ пулӑшу парас ӗҫе организацилемен тата политикӑллӑ агитаци ӗҫне те кирлӗ пек туса пымаҫҫӗ. Опытлӑ трактористсем те ҫамрӑк трактористсене пулӑшса, вӗрентсе пымаҫҫӗ. Бригадирсем ҫамрӑк трактористсен ӗҫ ӑнманнине курсан, вӗсене пулӑшас вырӑнне ятлаҫҫӗ. МТС дирекцийӗ те ҫаплах тӑвать. Тӗслӗхрен, 7-мӗш трактор бригадинче ӗҫлекен Г. Никитина, П. Петрова трактористкӑсен ҫуракинчи ӗҫсенче кӑлтӑксем пулкаланӑ. Вӑхӑтра техникӑллӑ пулӑшу панӑ пулсан, вӗсем хӑйсен ӗҫне ӑнӑҫлӑн тума пултарнӑ пулӗччӗҫ. Анчах МТС директорӗ ку трактористкӑсене «ӗҫлеме пӗлмеҫҫӗ» тесе ӗҫрен кӑларнӑ.

Ҫамрӑк трактористкӑсене ӗҫре вӗрентсе пымалла, вӗсене тракторпа ӗҫлеме хӑвӑртрах вӗрентсе ҫитермелле. Лайӑх ӗҫлекен трактористсен ӗҫ опычӗпе паллаштармалла. Сӗнтӗр МТС-ӗн руководителӗсен ҫакна шута илсе ҫамрӑк трактористкӑсене хаклама вӗренмелле.

Г. АКИМОВ.

ПУЛӐ ТЫТАКАНСЕН ӖҪӖ

ЕТӖРНЕ. Пулӑ тытакан колхоз членӗсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек ӗҫлеҫҫӗ. Колхоз май уйӑхӗнче тӗрлӗрен пулӑсене 15 центнер тытас вырӑнне 18 центнер тытнӑ. Пулӑ тытакан бригадӑсем хушшинчи ӑмӑртура пӗрремӗш бригада малта пырать. Май уйӑхӗнчи задание вӑл 137 процент тултарнӑ.

Пулӑ тытнӑ ҫӗрте колхозниксенчен уйрӑмах Долгинов, Абакумов, Крынецкий юлташсем пултарулла ӗҫлеҫҫӗ. Май уйӑхӗнче вӗсенчен кашниех 250—260 килограмм пулӑ тытнӑ.

П. С.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Коммунистсемпе комсомолецсем—социализмлӑ ӑмӑрту организаторӗсем

Фронта валли питех те кирлӗ продукци туса тӑрас ӗҫе йӗркелесе ярас тӗлӗшпе Шупашкарти электроаппаратура завочӗн коллективӗ тимлӗн ӗҫлерӗ. Социализмла ӑмӑртса ӗҫлени пире сахал мар ҫитӗнӳсем тума май пачӗ.

Апрель уйӑхӗнчех заводра май уявӗ умӗнхи ӑмӑрту анлӑн сарӑлчӗ. Завод цехӗсен коллективӗсем пурте, нумай рабочисем социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ. Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртура завод коллективӗ хӑйӗн ҫине илнӗ обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫа кӗртрӗ, планран ирттерсе ҫӗршыв валли продукци туса кӑларчӗ.

Оборона Халӑх Комиссарӗн Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗ пире производствӑллӑ ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума хавхалантарчӗ. Май уйӑхӗнче эпир тата лайӑхрах ӗҫлеме тытӑнтӑмӑр. Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, заводри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем ӑмӑртура малти вырӑна йышӑнас ӗмӗтпе хастарлӑн ӗҫлерӗҫ.

Чылай цехсен тата участоксен руководителӗсем хӑйсене шеллемесӗр ӗҫлесе пример кӑтартрӗҫ. Коммунистсем —Цфасман, Буйволов, Калитвянский, Скиндер тата Златопольский юлташсем ертсе пыракан цехсем май уйӑхӗнчи программӑна 15—20 процент ирттерсе тултарчӗҫ.

Ӗҫ вырӑнӗсене лайӑх организацилենипе, техникӑллӑ пӗлӳсене ӳстерсе пынипе, производствӑра лайӑх ӗҫлеме тӑрӑшнипе пирӗн заводри стахановецсем ӗҫ тухӑҫлӑхне нумай пысӑклатрӗҫ. Коммунист Дмитренко, комсомолкӑсем Данилова, Филимонова, Шишкова юлташсем ӗҫ нормине 150—250 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Производствӑра хастарлӑ ӗҫленӗшӗн Дмитренко, Данилова, Рытченко юлташсене Чӑваш АССР Верховный Совечӗн хисеплӗ грамотипе наградӑланӑ. Производствӑра ӗҫлекен коммунистсем пурте ӗҫ нормисене ирттерсе тултарса пыраҫҫӗ.

Коммунистсемпе комсомолецсем тӑрӑшса ӗҫленине кура, беспартийнӑй рабочисем те ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстереҫҫӗ. Сӑмахран, инструментальнӑй цехри токарь Муркин юлташ апрель уйӑхӗнче ӗҫ нормине 81 процент кӑна тултарнӑ пулсан, май уйӑхӗнче — 128,9 процент, слесарь Казаков юлташ апрельре задание 90 процент тултарнӑ пулсан, май уйӑхӗнче — 142 процент пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Апрель уйӑхӗнче ӗҫ нормисене 91—92 процент тултарнӑ шлифовальщик Пивоваровпа прессовщица Бермонт май уйӑхӗнче заданисене 167—168 процент пурнӑҫларӗҫ. Шлифовальщица Дурнева май уйӑхӗнче нормӑна 282 процент тултарчӗ.

Коммунистсемпе комсомолецсем нумайӑшӗ агитаторсем пулса рабочисем хушшинче ӗҫлеҫҫӗ. Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗ ҫинчен кашни рабочинех, инженерно-техническп работникех каласа кӑтартнӑ. Ҫакӑ вара ӗҫри хастарлӑха ӳстерчӗ.

Ҫавӑн пек тимлӗн ӗҫленин результачӗ куҫ умӗнчех. Май уйӑхӗнче завод коллективӗ пысӑк ҫитӗнӳ турӗ, плана ирттерсе тултарчӗ, социализмлӑ ӑмӑртура малти вырӑна йышӑнчӗ. Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральнӑй Совечӗпе Промышленность Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата преми илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Ҫак награда пире малашне тата лайӑхрах ӗҫлеме, ытларах тата лайӑхрах продукци кӑларма хушать. Завод коллективӗн ҫав Хӗрлӗ Ялава алӑрах тытса усрассишӗн хастаррӑн, ҫине тӑрса, ырми-канми ӗҫлес пулать.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура электропромышленность Наркомачӗ енӗпе пӗррӗмӗш вырӑна йышӑнас, Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулас тӗллевпе завод коллективӗ июнь уйӑхӗнче социализмлӑ ӑмӑртӑва тата анлӑрах сарса пырать. Ҫак ӑмӑртура заводри коммунистсемпе комсомолецсем малта пырӗҫ, вӗсем двухсотниксен, трехсотниксен, тысячниксен йышне ӳстерме тӑрӑшӗҫ.

В. ПОДДУБКО,
Шупашкарти электроаппаратура завочӗн партбюро секретарӗ.

КОМСОМОЛЕЦСЕН ЙЫШӖ ӲСЕТ

СОВЕТСКОЕ. Районри ҫамрӑк патриотсем Ленинла комсомол ретне кӗреҫҫӗ. Юлашки уйӑхсенче комсомолӑн Уйкасри «Металлист» колхоз ҫумӗнчи пуҫламӗш организацийӗ 6 ҫамрӑка, Ижелькассинчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз ҫумӗнчи пуҫламӗш организаци 5 ҫамрӑка, Николаевскинчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозри организаци 4 ҫамрӑка комсомола илнӗ.

Н. ПАХОМОВ.

Районри хаҫатсене пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн

Ответлӑха туйман ҫӗрте

Хаҫат—парти организацин чи ҫивӗч хӗҫпӑшалӗ. Ӑна пысӑк пахалӑхпа кӑларас тесен, редакци сотрудникӗсен тӑрӑшса ӗҫлемелле. Ун ҫинчен Шӑмӑршӑ районӗнчи хаҫат редакцийӗнче аван пӗлеҫҫӗ. Анчах та вӗсен аллине шанса панӑ «Сталин ялавӗ» хаҫата вӗсем питех те ҫӑмӑллӑн кӑлараҫҫӗ.

Акӑ ҫав хаҫатӑн майӑн 24-мӗшӗнчи номерӗ. «Пахча-ҫимӗҫсене вӑхӑтра лартса хӑварар» ятлӑ умстатья пичетленнӗ. Ҫав статья шӑп та шӑп «Чӑваш Коммуни» хаҫатӑн майӑн 19-мӗшӗнчи номерӗнче тухнӑ умстатья. Унта районри «Красная звезда», «Заря», «Динамо» тата ытти колхозсен ячӗсене кӗртсе лартнӑ та районри хаҫатӑн статьи пулса тӑнӑ. Пуянкассинчи колхоз «Заря» ятлӑ, анчах ӑна вара «Знамя Октября» ятлӑ туса хунӑ.

Хаҫатӑн майӑн 26-мӗшӗнчи номерӗнче «Коммунистсемпе комсомолецсем — ҫуракин организаторӗсем» ятлӑ статья пур. Кун пек статья «Чӑваш Коммуни» хаҫатӑн майӑн 20-мӗшӗнчи номерӗнче тухнӑ. Мӗнле уйрӑмлӑх пур-ха вӗсен иккӗшӗн хушшинче? Каллех «Чӑваш Коммунинчи» статьяна районри колхозсен тата хӑшпӗр коммунистсен ячӗсене кӗртсе лартнӑ та пичетлесе кӑларнӑ. Ҫитменнине тата статьян малтанхи предложенине тӗрӗс ҫырса илеймен. «Коммунистсемпе комсомолецсем массӑна ҫитӗнӳсем тума ҫӗклесе...» тенӗ «Чӑваш Коммуни» хаҫатра, Шӑмӑршӑри редакцинче ӗҫлекенсен вара «ҫӗкленсе» пулса ларнӑ.

Хаҫатӑн ҫак икӗ номерӗнче грамматика тӗлӗшпе йӑнӑшсем нумай.

Шӑмӑршӑри редакцинче ответлӑха туймаҫҫӗ.

Г. СОФРОНОВ.

Самолетсен звенине тума укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе вӑйлатмалла

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче осоавиахимӑн пуҫламӗш организацийӗсен пухӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ. Ҫав пухусенче осоавиахимовецсем Ишлей районӗн центрӗнчи хӗрарӑмсен подразделенийӗ самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тума укҫа-тенкӗ пухасси ҫинчен чӗнсе каланине сӳтсе-яваҫҫӗ. Ку чӗнӗве сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн, Чӑвашпотребсоюзӑн тата осоавиахим хула совечӗн коллективӗсенче самолетсен звени валли пӗр кунхи ӗҫукҫине пама йышӑннӑ, статистика управленин коллективӗ — 500 тенкӗ, Госбанк конторинче ӗҫлекенсем 715 тенкӗ панӑ.

Ҫав вӑхӑтрах осоавиахимӑн Чебторгри пуҫламӗш организацийӗ самолетсен звени валли 200 тенкӗ, Чӑваш АССР государство издательстви ҫумӗнчи организаци 100 тенкӗ кӑна пухнӑ. Осоавиахимӑн хулари пуҫламӗш организацийӗсем чылайӑшӗ ҫак ӗҫе тума тытӑнман та.

Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тума укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе осоавиахимӑн пуҫламӗш организацийӗсен массӑллӑ ӑнлантарӑва анлӑн сарас пулать. Укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе осоавиахим членӗсене кӑна мар, мӗнпур ӗҫҫыннисене хутшӑнтарма тӑрӑшмалла. Самолетсен звенине тума кашни ӗҫҫынни хӑйӗн укҫа-тенкипе пулӑштӑр.

М. КОРСКОВ,
Осоавиахимӑн Шупашкар хула совечӗн председателӗ.

Малта пыракансенчен пример илмелле

КАНАШ. П. Николаева юлташ—Вӑтакас Татмӑшри Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз счетовочӗ. Унпа пӗрлех вӑл ялсовечӗн виҫҫӗмӗш участокри заем уполномоченнӑйӗ пулса ӗҫлет. Николаева юлташ счетовод ӗҫне те, уполномоченнӑй ӗҫне те лайӑх туса пырать. Государствӑн 1942 ҫулти Военнӑй Заемне 8.750 тенкӗлӗх сарса, укҫине 3—4 кун хушшинчех пухса пачӗ. Ҫавӑн пекех колхоз председателӗ Я. Тихонов, бригадир М. Яранскова юлташсем те подписка укҫине кӗске вӑхӑтрах пухса ҫитерчӗҫ.

Анчах ҫав вӑхӑтрах «Париж Коммуни» тата «Динамо» колхозсенче заем укҫине пухас ӗҫ калама ҫук сӳрӗккӗн пулса пырать. «Париж Коммуни» колхозра 9.300 тенкӗрен 1.260 тенкӗ, «Динамо» колхозра 10.740 тенкӗрен 4.000 тенкӗ кӑна пухнӑ. Кунти уполномоченнӑйсем Хрисановпа Ярлов юлташсем подписка укҫине пухас тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ. Вӗсен ку ӗҫре ялсоветӗнче малта пыракансенчен пример илмелле.

Т. ТУРХАН.

Вӑхӑтлӑха оккупациленӗ совет районӗсенче халӑхран мӑшкӑллани

СТОКГОЛЬМ, июнӗн 8-мӗш. (ТАСС). Нимӗҫсен «Гамбургер фрейденблат» ятлӑ фашистла хаҫатӗнче ҫар корреспонденчӗн статьине пичетленӗ. Ҫав статьяра корреспондент вӑхӑтлӑха оккупациленӗ совет районӗсенчи халӑхсем валли захватчиксем каторгӑлла йӗрке туса хуни ҫинчен ҫырать. «Ирхине ирех ялти мӗнпур халӑх — 16 ҫултинчен пуҫласа 70 ҫула ҫитичченнисем — нимӗн чӗнмесӗр комендатура умне йӗркипе тӑрса тухаҫҫӗ. 7 сехет те 45 минутӑра крыльца ҫине нимӗҫ унтер-офицерӗ тухать, унпа пӗрле вырӑнти халӑхран кам та пулсан, нимӗҫ чӗлхине пӗлекенскер, тухать. Унӑн аллинче хулӑм кӗнеке. Вӑл пурне те ятран чӗнсе тухать, казарма картишӗнче фельдфебель салтаксене ятран чӗнсе тухнӑ пекех. Чи малтан ҫарӑн дезинфекци камери валли вӗри шыв илсе пыма тата камерӑна хутма виҫӗ ҫын уйӑрса хураҫҫӗ. Унтан 5 ремесленникпа пӗр техника уйӑрса хураҫҫӗ, вӗсене артиллерипе авиабомбӑсем сиенленӗ ҫуртсене юсама хушаҫҫӗ. Стройматериалсем тупма ҫуртсене сӳтеҫҫӗ. 6 ҫын дубильнӑра ӗҫлет. Ытти арҫынсем урамсене тасатаҫҫӗ, пушар командинче ӗҫлеҫҫӗ. Арҫынсем кайса та ӗҫ кӗрейместҫӗ, комендатура патӗнче хӗрарӑмсем, хӗрсем тата ҫитӗнмен ачасем—12 ҫултан пуҫласа 16 ҫула ҫитнисем пухӑнаҫҫӗ. Каллех пурне те ятран чӗнсе тухаҫҫӗ. Ялти пӗтӗм халӑх Германи ҫарӗсен аллинче тӑрать. Хӗрарӑмсем салтаксен хваттерӗсене шӑлса-ҫуса тӑраҫҫӗ, салтаксен кӗпи-йӗмӗсене ҫуса, юсаса тӑраҫҫӗ, носкисене юсаҫҫӗ, ҫӗр-улми тасатаҫҫӗ.

Ялта вырнаҫнӑ Германи ротин командирӗ апат-ҫимӗҫе нимӗҫсем валли ӗҫлекен ҫынсене анчах пама хушнӑ. Малтанхи кунах вӑл апат-ҫимӗҫсен мӗнпур запасӗсене туртса илме хушса приказ кӑларнӑ. Вӑрлӑхсене те туртса илнӗ. Лаша какайӗ унта питӗ тутлӑ апат шутланать».

«Нимӗҫсем тунӑ йӗрке, — тесе ҫырать юлашкинчен корреспондент, — питӗ хытӑ йӗрке. Айӑпа кӗнӗ пӗр ҫамрӑка полицейски патне илсе пынӑ та ӑна полицейски чӗнпиҫиххипе хытӑ хӗнесе илнӗ».

Англи авиацийӗн ӗҫӗсем

ЛОНДОН, июнӗн 8-мӗш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви ҫапла пӗлтерет: июнӗн 8-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле истребительнӑй авиацин соединенийӗсем Ҫурҫӗр Франципе Голландири чылай объектсене атакӑланӑ.

Англи авиацийӗ Брюггене тапӑнни

ЛОНДОН, июнӗн 9-мӗш. (ТАСС). Англи авиацин министерстви кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: июнӗн 8-мӗшӗнче кӑнтӑрла «Бостон» йышши бомбардировщиксем, истребительсен вӑйлӑ экскорчӗ хӳтӗлесе пынипе, Ла-Манш проливӗ тӗлӗнче тата противник оккупациленӗ территори ҫинче пысӑк наступлениллӗ операцисем тунӑ. Брюггери доксем ҫине тата ытти объектсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Белги ҫыранӗсенче пулса иртнӗ тинӗсри ҫапӑҫу

ЛОНДОН, июнӗн 8-мӗш. (ТАСС). Англири радио пӗлтернӗ тӑрӑх, июнӗн 7-мӗшӗнче ирхине Бельги ҫыранӗсем ҫывӑхӗнче Англин тинӗсри ҫӑмӑл вӑйӗсем Германин тинӗсри чылай йышлӑрах вӑйӗсене хирӗҫ ҫапӑҫу пуҫласа янӑ. Нимӗҫсен пӗр миноносецне путарнӑ. Англин пӗр ҫӑмӑл карапне пысӑк мар сиен тунӑ.

Пӗрлешӳллӗ ҫӗршывсемпе нейтральнӑй ҫӗршывсен суту-илӳ флочӗсен Атлантика тинӗсӗнчи ҫухатӑвӗсем

ВАШИНГТОН, июнӗн 9-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, 1941 ҫулти декабрӗн 7-мӗшӗнчен вара Атлантика тинӗсӗнче пӗрлешӳллӗ ҫӗршывсемпе нейтральнӑй ҫӗршывсен 251 суту-илӳ пароходне путарнӑ. Вӑл шутран 119 пароход Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫыранӗ ҫывӑхӗнче путнӑ.

Англи авиацийӗ Рур ҫине тапӑнни

ЛОНДОН, июнӗн 9-мӗш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: июнӗн 9-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи бомбардировщикӗсен пысӑк соединенийӗсем Рур облаҫӗнчи промышленноҫлӑ районсене атакӑланӑ.

Тата ҫавӑн пекех Дьеппри доксем ҫине тата противникӑн Голландипе Бельгири аэродромӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Истребительнӑй авиаци Ҫурҫӗр Францири тата Голландири аэродромсемпе чугунҫул объекчӗсене атакӑланӑ. Ҫыранри авиацин самолечӗсем Ҫурҫӗр тинӗсӗ тӗлӗнче нимӗҫсен пӗр самолетне пӗтернӗ.

Ҫав операцисенчен Англин 18 бомбардировщикӗ каялла таврӑнман.

Италире Франципе хирӗҫле кампани пырать

СТАМБУЛ, июнӗн 9-мӗш. (ТАСС). Итали пичечӗ ҫаплах Франципе тапӑнса, ӑна хирӗҫле статьясем ҫырса кӑларать. «Гадзетта дель пополо» хаҫат французсен Ниццы тата Аяччори (Корсика) епископӗсене айӑпласа ҫырать. Вӗсем Италие хирӗҫле ӗҫлеҫҫӗ, тет.

«Пополо д'Италиа» хаҫат французсене вӗсем оккупантсем валли ӗҫлеме килӗшменшӗн айӑпласа ҫырать.

КӖСКЕН

Норвегире май уйӑхӗнче 200 хаҫата яхӑн вӑрттӑн тухса тӑнӑ. Вӗсенчен хӑшпӗрисем пысӑк тиражпа тухса тӑрса пӗтӗм ҫӗршыва саланаҫҫӗ.

* * *

Мексика танкерӗсене халӗ зенитнӑй тупӑсемпе тата пулеметсемпе хӗҫпӑшаллантарнӑ, тӑшманӑн подводнӑй лодкисемпе кӗрешме танкерсем ҫинче шыв ӑшне пӑрахмалли бомбӑсем пур.

* * *

Англири верфьсенчен пӗринче Англия Греци панӑ пирвайхи эсминеца Греци правительствин представителӗсем йышӑннӑ. Грецин информаци министрӗ Михелопулос ҫапла каланӑ: англичансем «ҫак карапа шанчӑклӑ алла — грексен аллине параҫҫӗ, часах грексем ҫак орудипе усӑ курма пӗлнине кӑтартса парӗҫ», тенӗ.

* * *

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫӗрӗҫ министрӗ Виккард ҫапла пӗлтернӗ: «Мӗн тата мӗн чухлӗ кирлине тӗпчесе пӗлме тунӑ комитет» союзниксене апат-ҫимӗҫ кирлине Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен граждански халӑхне кирлинчен те маларах хурса пӑхӗ, тенӗ.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ЧЕБОКСАРСКИЙ РАДИОУЗЕЛ
доводит до сведения всех, что с 1 мая 1942 г. абонентная плата за радиотрансляционные точки индивидуального пользования, а также в общежитиях предприятий устанавливается:
За наушники 6 руб. в мес.
За электромагнитные репродукторы 8 руб. в мес.
За динамические репродукторы 12 руб. в мес.
За апрель месяц за точки всех трех категорий следует платить по 8 руб.
Всем абонентам, не сделавшим перерасчет, необходимо таковой произвести до 15 июня с. г.
2—1 РАДИОУЗЕЛ.

ЧЕБОКСАРСКОЙ ПОЛИКЛИНИКЕ ТРЕБУЮТСЯ:
квалифицированные зубные техники, кучер и кладовщик.
АДМИНИСТРАЦИЯ.

КОЖСЫРЬЕОБРАБОТКЕ
требуются опытный счетовод, экспедитор, рабочие.
Обращаться: г. Чебоксары, ул. Ворошилова, 27.

ТРЕБУЮТСЯ НА РАБОТУ:
плотник и слесарь-водопроводчик, знающий центральное отопление.
За справками обращаться: гор. Чебоксары, Канашская, 27.

Учхозу Вурнарского зоотехникума
требуется бухгалтер, знакомый с с./х. бухгалтерией. Обеспечивается квартирой и продуктами из подсобного хозяйства.
Обращаться: д. Булатово, Вурнарского района ЧАССР.

Чувашской конторе «Заготживсырье»
требуются на постоянную работу:
главный бухгалтер, бухгалтера-ревизоры, старший бухгалтер, товаровед по встречной торговле и отгрузкам сырья, охотовед, специалисты по кожевенному, пушномеховому сырью и шерсти, завхоз, дворник, сторож.
Обращаться по адресу: ул. Ленина, № 31. Телефоны: 6—42, 2—61.
2—1 Заготживсырье.

Чувашскому тресту «Росглавхлеб»
требуются: главный бухгалтер, нормировщик, товаровед и зав. складом.
Обращаться: Чебоксары, Калинина, 6. Тел. № 7-93. 5—5.

НУЖНЫ 2 МАШИНИСТА-ПАРОВИКА И 2 ТОКАРЯ.
Обращаться в отдел кадров, ул. Калинина, д. № 51.

ЧУВАШАПТЕКОУПРАВЛЕНИЮ
требуются: главный бухгалтер и юрисконсульт для аппарата, главный бухгалтер для Канашского аптечного склада, старший бухгалтер для химфармлаборатории.
Обращаться: г. Чебоксары, Аптечная ул., № 13. Тел. 6-22.

Чебоксарскому тресту столовых
требуются: работники по заготовке и переработки грибов, агент по децзаготовкам, главный бухгалтер, инструктор-кулинар, инженер-технолог, товаровед по продтоварам и статистик.
Обращаться по адресу: ул. Ленина, д. № 11, отдел кадров треста столовых.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 831. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п. л.